# ИОГАННЕС БЕХЕР

*Демократиллĕ Германи Республики*

## ЧИ ЙЫВĂРРИ

Чи йывăрри ак çак пулмарĕ-ши?
Атте лап ӳкрĕ... Пичĕ шап-шурах...
Ирпе ăна пытарчĕ ман çĕршыв.
Ку йывăр та,—пулать йывăртарах.

Е çак и йывăрри? Эс пĕр-пĕччен,
Тулта сĕм каç, тусу-йышу та çук,
Аннӳ те, тăвану та пит инçе.
Асап! Анчах тата асап хăш чух.

Савни каланăччĕ пĕрре мана:
„Эп теприне саватăп ытларах...“
Тĕлĕкри пек тинкертĕм эп ăна.—
Чăн, йывăрччĕ! Пулать — йывăртарах.

Ак çакă мар-и? Ним тăвас килмест,
Кунсем-çĕрсем иртеççĕ пуш-пушах,
Ниçта кайса кĕре пĕлместĕн эс.
Пит йывăр ку! Пулать йывăртарах

Миçе хутчен хама эп каламан:
„Хĕн куртăн, тӳсрĕн, такăнтăн пайтах,
Чи хĕннине çапах та эс курман,
Курман, анчах куратăн-ха çавах“.

Ман халăхăм, çулпуç тесе шанса,
Çурма ăслă çын хыççăн кайнă кун,
Йĕри-тавра тискерлĕх вăл аксан,—
Тӳсме хал çук ыратнăччĕ ман чун.

Тиран ал сулчĕ — вăрçă аттипе
Таптанчĕ вăхăт, чарăнчĕ прогресс;
Пайтах хĕрелчĕ çĕр çын юнĕпе...
Ах, йывăр! Айăпа епле çĕклес?

Сана сан халăху — ăна савсан
Çăласшăн тăрăшса ĕçлен çынна —
Юта хурса хăваласа ярсан,—
Ку — вилĕмрен те йывăр, чăн-чăнах!

1945